К 84
А-94
8839-чув

сей Афанасьев



# Туслăхпа юрату

Национальная библиотека ЧР
4-008839

…ОКА ВОЗВРАТА

…ОЛЖНА БЫТЬ
…НА НЕ ПОЗЖЕ
… ЗДЕСЬ СРОКА

Количество пред. выдач ____________

| | | |
|---|---|---|
| | | |

8839 шув

ЧӐВАШ АССР
КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1963



аф
С(чув)
А94

Алексей Афанасьев

# ТУСЛĂХПА ЮРАТУ





ПРОВЕРЕНО
20 10 11 ОКТ 2017

*Çак кĕнекере Алексей Афанасьев поэт хамăрăн хĕрÿ пурнăçа анлăн кăтартса парать. Çĕнĕ стройкăсем çинчен çырать-и вăл, колхоз пурнăçне сăнлать-и — пур çĕрте те этемĕн пысăк юратăвне, чăн-чăн туслăха чи малти вырăна хурать. Тăван Çĕршыва, совет çыннине мухтаса юрлать, çутçанталăка илемлĕ сăрсемпе сăнлать.*

*Автор, Тутар республикинчи нефть кăларакан районта пурăннă май, нефтянниксем çинчен те юратса çырать, халăхсем хушшинчи туслăха, вĕсен ĕçне-хĕлне ĕненмелле кăтартса парать.*

8839-ччв.

Чувашская ... БИБЛИОТЕКА им. М. Горького г. Чебоксары ... ской АССР

## ÇУРАЛНА ÇĔРШЫВРА

Вăйлă, теççĕ, вăйлисем пире —
Пирĕн вăй, чăнах та, иксĕлми!
Вăйсăр çын писен шăтман çĕре
Сад лартса ӳстермĕ пан улми...

Вăйсăр çын, шывсен пырне касса,
Тинĕссем тăваймĕччĕ, куран.
Вăйсăр чух вăлах халран кайса
Киммине те сĕтĕрнĕ аран.

Вăйлă çын машинă чĕлхипе
Ту-вăрмансене калаçтарать.
Пăралук халь пирĕн тилхепе —
Аслати вутне вăл чуптарать.

Вăйсăр çын тĕнче тĕлĕнмелле
Вĕçейсе килеймĕ Çĕр тавра,
Çитерейме Уйăх патнелле
Хамăрăн çунатлă çăлтăра.

Вăйлă, теççĕ, тĕнчере пире —
Ахальтен тухман çак чăн сăмах:
Парти вăйĕ пирĕн чĕрере,
Пирĕн вăй — Тăван çĕршывăнах!

Аслă, теççĕ, пирĕн халăха,
Аслине пĕлсе калать этем.
Çĕрĕ, шывĕ аслă мар-и-ха?
Аслă мар-и сăрчĕ-тăвĕсем?..

Çитмĕл çичĕ тинĕс таппинче
Манăн аслă халăхăм хуçа,
Çăлтăрсен çулне виçе-виçе
Тĕттĕм Космос чаршавне уçать.

Ĕçĕ пысăк аслă халăхăн,
Аслă мар-и ун ĕмĕчĕсем?
Сӳнччĕр, пĕтчĕр татăк-татăкăн
Çĕр çинче пушар вучахĕсем!

Аслă халăх аслă Çĕр çине
Пĕр куна килмен —
ĕмĕрлĕхе!
Çунтарма туман вăл ялсене —
Юрласа пĕр пурăнмашкăн-çке!

Аслă, теççĕ, пирĕн халăха
Аслă çĕршывра çуралнăран,
Савнăран ĕçпе тăнăçлăха,
Партипе пĕр шухăш тытнăран.

Юратаççĕ пирĕн халăха,
Юратаççĕ тивĕçне кура.
Ма пытармалла маттурлăха
Пурте мухтасассăн хамăра?

Пур-и пирĕн хĕвелтен ăшши?
Пур-и пирĕн сивĕ çил пекки?
Чаплă мар-и çумăрсен ташши?
Сăрлă мар-и сарамат пĕкки?..

Кăвакарчăн пек, тӳпе кăвак
Вăшăл-вăшăл кайăка вĕçме.
Тыррисем вăрман пек, хумĕсем сулмак —
Мухтанатпăр халăх ĕçĕпе.

Юратаççĕ пирĕн халăха,
Шăратаççĕ хамăрăн юрра.
Чăн, эпир пулман çав начаркка
Хамăрах çуралнă çĕршывра!

Вăйлă, теççĕ, вăйлисем пире,
Аслă, теççĕ, аслине кура.
Парти вăйĕ — пирĕн чĕрере,
Ленин сăнĕ — яланах умра.

---

## ПАРТИ КУРАТЬ

Сарална кураксем ĕнсе.
Тăпра кумкки чулран та хытă.
Таçти-таçти окопсенче
Ĕнсесене кăшлана пыйтă...

Тустарнă выçлăх ялсене.
Хирте те, ӳт çинче те саплăк.
Пĕркелентернĕ питсене
Тăварлă куççульпе асаплăх.

Çынсем тархаслă сасăпа
Чĕркуçленсе ларса кĕл тунă:
«Курмасть-шим пирĕн асапа
Çĕрти патша, çӳлти пĕр тура!»

Çĕрти-çӳлти, çук, шарламан,
Курман, илтмен. Пĕлетĕр хăвăр:
Çӳлтен сурса ларма аван —
Çĕртен çӳле сурмашкăн йывăр.

Анчах та халăх нушине
Анланчĕ, курчĕ аслă Парти.
Хĕвеллĕ такăр çул çине
Халăхсене ертсе кăларчĕ.

Унран та витĕр куракан
Çут тĕнчере пулман та, çук та.
Паянхине çеç мар, ыран
Мĕн пуласса курать вăл çуттăн.

Юрлатăн-и, телей килсен,
Куçусенче сан пур-и хурлăх
Е, тăвăла лексе, пĕччен
Ишетĕн-и шух тинĕс урлă,—

Тăванăм, кашни утăмра
Курать сана юратнă Парти.
Хум евĕр пурнăç —
 ан хăра! —
Сана антарĕ вăл, хăпартĕ...

Эс, Партипе пулса пĕр чун,
Пĕр сулăмлăн хăватлăн сулăн! —
Шух тинĕсре ху пулăн хум,
Вутра ху пулăн вăйлă çулăм!

1961 ç.

## ПИРĔН ÇУРКУННЕ

Çуркунне —
çеçкере.
Сар хĕвеллĕ çанталăк.
Пĕлĕтсем тӳпере
Мамăк пек,
татăк-татăк...

Шавламасть-ха вăрман —
Вăранса çитеймен-и...
Вăрансам ыйхăран,
Аслă симĕс керменĕм!

Çитмĕл çич кантăку,
Санăн çитмĕл çич алăк —
Уçса ярăн тăрук —
Янрĕ-кайĕ çанталăк!

Тӳрĕ çул сăрталла
Тăсăлать вăрман витĕр.
Çывăхри пĕр яла,
Ачасем, хăвăрт çитĕр!

Çав ялта пурăнать
Ват салтак — сирĕн пиччĕр.

Питĕре ас тăвать —
Тĕп хула пулнă Питĕр.

Унта ларнă патша
Раççейри чăн хуçа пек.
Çĕр çине çĕр нуша
Янă вăрçă асапĕ.

Çиме çăкăр çитмен,
Çире пулнă
çĕр саплăк.
Аслă Ленин çинчен
Илтнĕ-пĕлнĕ пур халăх.

Пусмăрти сынсене
Кĕрешме чĕннĕ Ленин.
Аллинчи пăшалне
Ват салтак та çĕкленĕ.

Ушкăн халăхпала
Ленина кĕтсе илнĕ —
Питĕрти вокзала
Аякран Ленин килнĕ.

Ас тăвать ват салтак:
—Каç. Финлянди вокзалĕ.
Çын кĕрлет вокзалта,
Тĕп хула шутсăр шавлă.

Манас çук ĕмĕрне:
Броневик. Аслă Ленин.

Ăнтăлса аллине
Малалла вăл тĕлленĕ.

Паянхи çуркуннем,
Паянхи çутă кунăм!
Ун чухне
сан енне
Ун алли çул-йĕр хунă.

...Çул чипер, сарлака —
Ачасем, хăвăрт чупăр!
Ĕлĕкхи салтака
Паянах кайса курăр.

Ленина курнине
Ват салтак сире калĕ.
Çак çурхи кунсене
Пире кам панă халĕ?

Ленин панă ăна,
Çавăнпа Çĕр илемлĕ.
Пирĕн çутă куна
Тĕксĕм пĕлĕт илеймĕ!

1960 ç.

## ЭС АТАШМАН

Пĕр-пĕччен тухса кай аякка,
Кунĕн-çĕрĕн утсам тĕлсĕр-çулсăр,
Çурăму хыçĕнчи кутамкка
Кĕмĕлпе, ылтăнпа тулли пултăр...

Çиçтĕр сарă хĕвел кăнтăрла,
Çурла-уйăх çутаттăр пĕр саншăн,—
Эс çухалăн кайса таçталла,
Кутамкку-мĕнĕпех эс аташăн.

Çурăму хыçĕнче ылтăн мар,
Чĕрӳнте, асăнта пултăр Ленин,
Пултараймăн ун чух аташма,
Çĕр тавра çаврăнсан та ĕшенмĕн.

Йывăр çул çăмăл пулĕ утма,
Тарăн шыв ăшăх пулĕ ишмешкĕн.
Кайăн эс çухрăмран çухрăма,—
Ан кулян ылтăн-кĕмĕл илменшĕн!

Тĕнчере пит нумай çул-йĕрсем,
Пит нумай шыв-шурсем урлă kaçăн.
Ют çĕрте пĕр чĕлхе пĕлмесен,
Эсĕ Ленин ятне кăна асăн —

Ленин сывă тесен, пин тăван,
Пин юлташ çул çинче əсĕ тупăн.
Тус-тăванлăх паха кĕмĕлтен, ылтăнран,
Тус-тăван пур чухне чухăн пулмăн.

Пултараймăн ун чух аташма,
Çĕр тавра çаврăнсан та ĕшенмĕн.
Çурăму хыçĕнче ылтăн мар,
Чĕрӳнте, асăнта пултăр Ленин!

1959 ç.

## АНДРИЯН НИКОЛАЕВА

Ман аттен те ячĕ Андриян...
Çĕр çинчех çӳрет, вĕçсе курман.
Суккăр ашшĕ выçă ларасран
Кĕтӳçре çӳренĕ ачаран...

Çăлтăрсен саланчăк кĕтӳне
Эсĕ Космоса кĕтме кайсан,
Чараймарĕ савнăç куççульне
Ман аттеçĕм — вата Андриян.

Эс те Андриян. Эс — çамрăкки.
Сан сăпку — çĕн самана сакки.
Хамăр халăх чунĕ пысăкки
Савăнтарчĕ!
Тыт-ха тав курки!

Андриян нумай, эс — пĕрре çех,
Эс пĕрре кăна-ха чăвашра.
Çаврăнса тăрайĕ ĕмĕрех
Сан чапу Çĕр чăмăрĕ тавра!

1962 ç.

# ТАВТАПУÇ

Тавтапуç сана, Тăван çĕршывăм,
Эсĕ ырă, вăйлă та таса...
Çакăнта çуралтăм, юрă хыврăм
Пурнăçа хĕвелшĕн, юратса!

Хум çапать кунта тăван уй-хирĕм,
Ашă çумăрсем иртеç çăва-çăва,
Ян каять куккук сасси каç-ирĕн,
Чашлатать уçланкăра çава...

Эс хитре те чаплă, ман Çĕршывăм!
Вăрмансем çунаççĕ, кĕр çитсен...
Шур хĕл кунĕ паслă, чăрсăр сивĕ,
Хĕл тумтирĕ — кĕмĕл те мерчен...

Тавтапуç асран кайми сăнсемшĕн,
Хуть мĕнле тумпа та эс маттур.
Эп, сана савса, анне теем-ши —
Ман сăнра-çке сан сăну та пур.

Тавтапуç сана, Тăван çĕршывăм,
Сан арку çинче-çке çуралса,
Выляса-кулса ӳсет хĕр-ывăл
Ху пек ырă, вăйлă та таса!

1958 ç.

8839-чув

# ТĔНЧЕ КУРАС ТЕСЕН...

Айлăма курас тесен,
Улăх çӳллĕ ту тăрне:
Курăн тĕк пек вĕçекен
Сĕтлĕ шур пĕлĕтсене...

Сĕтлĕ пĕлĕт çук ан те.
Пĕлĕт сĕтлĕ — эсĕ шан:
Асамат пĕкки çӳлте
Çумăра ташлаттарсан,

Айлăм тăрăх улăха
Ешĕл курăк сарăлсан,—
Çумăр сĕтлĕ мар-и-ха?
Сĕтлĕ çумăр, çу ялан!

Айлăма курас тесен,
Улăх çӳллĕ ту тăрне:
Курăн вутлăн çиçекен,
Шавлакан шыв-шурсене...

Шыв вут мар-и-мĕн? Вутах,
Сиçĕмех вăл, вăй-хăват;



Чувашская Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького
...ашской АСС...

Шыв пулсан, ӳсет пучах,
Ешерет илемлӗ сад...

Айлӑма курас тесен,
Ҫӳллӗ ту тӑрне хӑпар:
Мӗн вӑл айлӑм? Ҫӳресе
Пӗтӗм тӗнчене курар!

Тӗнчене курас тесен,
Мускава кайма васка!
Ун патне мӗн пур енчен
Ҫул-йӗр такӑр, сарлака.

Спутник ҫулӗ те унтан
Пуҫланать уйӑхалла...
Тӗп хуламӑр авалтан
Тӗнчере те пӗр хула!

Хӑнисемшӗн яр-уҫах
Хапхисем Мускав хулин.
Тараватлӑ ыр хуҫа —
Мускавра ҫуралнӑ ҫын —

Китайла та калаҫать,
Французпа та — французла...
Тӑнӑҫ, мирлӗ пурнӑҫа
Пӑстармасть вӑл усала.

Тӗнчене курас тесен,
Кай, тӑванӑм, Мускава.

Калаçан, куран, илтен
Тӗнчери пур çӗршыва.

Ялкӑшса унта тапать
Аслӑ Ленинӑн чӗри.
Мускавран пӑхсан, курнать
Ӗмӗрсен пулас ӗмри!

1958 ç.

## ЕМĔРТЕН ÇАПЛА ПЫРАТЬ

Пĕлĕт çилсĕр, тĕк тăрать,
Хусканмасть йăмра хулли...
Емĕртен çапла пырать
Ун саккунĕ, ун йăли.

Çил вĕрсен, шыв хумханать,
Хум чупать аяккалла,
Чупаймасть чул ту кăна —
Ун йăли-йĕрки çапла.

Шыв юхмасăр тăраймасть,
Çил вĕрмесĕр чăтаймасть,
Çуралать çын çарамас —
Саккунран иртме пулмасть.

Шыв-шура кирлех çыран,
Ирĕк кирлĕ этеме!
Ирĕк парăр авалтан
Чăн саккун çакăх теме.

Çутă ĕмĕт пулмасан,
Çын кĕтмест ыранхине —

Çак саккун та хамăртан
Уйрăлас çук ĕмĕрне.

Саккунсем нумай татах:
Çырнисем, çырманнисем...
Çын телейлĕ пултăрах!
Çĕр çинче саккун — Этем!

1958 ç.

# АГИТАТОР ПАТĔНЧЕ

Çăлтăрсем çырла вăйĕи пекех,
Шур пурак пек шурă уйăх пур.
Иртрĕç-çке çу кунĕсем. Каллех
Ял урамĕ — нăтăр-нăтăр юр.

Юр сивви персен те урана,
Кăмăл çуллахи пек ăшă-ха.
Лампăсем çутатнă урама,
Юрламасăр усăлмасть хапха...

Пĕр киле пуçтарăннă сынсем
Алăкран тĕпелелле çити.
Пухăнсассăн, тем те пĕр çинчен
Калаçма пурах сăмах ăсти.

Ăш сăмах вăл — чун-чĕре уççи,
Ыр сăмахăн вăйĕ — чăнлăхра.
Агитатор — çамрăк кил хуçи
Канăçне тупать калаçура.

Çăпата çинчен пымасть сăмах,
Ял çĕрне пайлас ыйту та мар...
Ял сынни пăрахнă аçама —
Ун çинчен сăмах та ан кăлар.

Паянхи хресчен тытать хаçат,
Тутă мар вăл çăкăрпа кăна.
Çут тĕнче çинчен вăл калаçать—
Тавлашсан, çĕнтерĕ патшана!

Çутă ĕмĕтпе пурнать тĕнче.
Калаçма та лайăх, ăшăрах.
...Çамрăк агитатор килĕнче
Сӳтĕлсе пĕтет-им ыр сăмах?

Чĕлĕмсем сӳнсен те, вăрахчен
Саланмаççĕ ваттисем киле.
Уйăхпа ракетăсем çинчен
Нумайран нумай пĕлес килет.

Çăлтăрсем çунаççĕ тӳпере,
Урамра та çăлтăрсем нумай...
Çуркуннехилле тапать чĕре
Урампа хаваслăн утнă май.

1959 ç.

## АСАТТЕ-СУЙЛАВÇĂ

Сĕм-суккăр нулнă асаттеçĕм манăн,
Вăл вулайман саккун кĕнекине.
Мĕнле кĕтсен те, пурнăçĕ ăнман ун
Кăвак хуппи кĕмен ун çĕр пӳртне.

Пухусенче вăл аякран итленĕ
Туйи çине тĕрексĕр таянса.
Хĕвел кулли, çурхи тĕнче илемĕ
Унран шăп пăраннă мĕлке пулса...

Эх, асаттем! Тĕлĕнмелле те мар-и:
Халь куçлă турĕç суккăр чăваша.
Куçусенчи çут савăнăç кăварĕ
Çунать-ха ăшăтмалăх кил-йыша.

Кул, савăн, асаттем! Эс пурнăç какĕ
Мĕнне пĕлетĕн кĕнекесĕрех.
Ал туйи мар,
хастарлă вăй, ăс-какăл
Ачусене çул пачĕ тӳп-тӳрех.

Шкул ачинчен те ир паян тăратăн —
Улт сехете çитесшĕн суйлава.

Урусенче сан çăтăр-çăтăр ată,
Авал унпа тухман эс уява.

Эс, асатте, ялта паян паха çын.
Ват аллуна илсессĕн бюллетень,
Шăтарасла сана куçран пăхаççĕ
Çамрăккисем яту хисеплĕрен.

Савăнăçпа чуну шăранĕ санăн
Чи ăшă сăмахсем шыра-шыра.
Сан сассуна, радиопа каланăн,
Кунта çеç мар, илтейĕç аякра.

Мĕн-ма тесен, эс чĕререн калатăн —
Чĕре сасси çитет таçти çĕре.
Кун-çулупа эс, асаттеçĕм, вată,
Чун-чĕрупе паян вун çиччĕре!

1962 ç.

# ПИРĔН ЯЛ

Ту айĕнче пытаннă ялăм пур.
Шăнкăр-шăнкăр ун çырми—йăмралăх,
Тăршшĕпех иленнĕ кайăк хур...
Сарлака урамĕсем маттур —
Пĕр туртсан, хут купăс янрамалăх!

Уйăха шухăшласа канма
Сĕм вăрманлă тăвĕсем ун çӳллĕ,
Е чупса ансассăн айлăма,
Эс чăматăн уй-хирти хума —
Хумĕсем карап путмалăх пулĕ!

Кашниех ялта — уй-хир ăсти,
Килĕрен кĕрекисем пит тулăх:
Çырлине çи, сăрине астив,
Ташласа кур тăрăст-тăрăсти —
Туй пулсассăн асăнмалăх пулĕ!

Ыр атте-анне çуратнăран
Хĕр-каччи ытараяс çук хӳхĕм.
Сар хĕвел анать аран-аран —
Каясси килмест тăван ялтан —
Ĕмĕр юратсассăн, уйрăлу хĕн...

Уйрăлмăп санран, çуралнă ял!
Сан патна таçтан та эпĕ килĕп.
Кăкăра лексессĕн те сухал,
Санпала чух иксĕлми вăй-хал —
Аттепе аннен юнри пехилĕ!

1958 ç.

# ТĂВАН ШКУЛ

Ял варринче шап-шур карап пек
Шкул куранса ларать хитре.
Пăхать ăна мăн ял урамĕ
Пĕр савăнса, пĕр тĕлĕнсе.

Тĕлĕнмелли пурах çав çуртăн,
Чун туртăнать çавăнталла.
Кантăкĕсем çĕрле çап-çутă,
Картишĕ шавлă кăнтăрла.

Йĕри-тавра — илемлĕ сачĕ,
Йывăçсем ун тĕрлĕрен.
Пĕр йывăçне эп хам лартсаччĕ
Пĕрремĕш хут шкула килсен...

Паян унта ман ывăл кайĕ,
Вăл лартĕ пĕчĕк улмуççи.
Ешертĕр сад! Юрлатăр кайăк —
Хĕвеллĕ пурнăç юрăçи.

Тăван шкула никам та манмĕ,
Асамĕ пур-тăр ун чăнах:
Кив юмахри айван Йăван пек
Унта эс кĕрĕн малтанах,

Пĕрре çумне эс хушăн иккĕ,
Якатĕ чĕлхÿне букварь.
Çул хыççăн çул васкавлăн иртĕ —
Эс ÿсĕн ăс-тăнлă, патвар.

Юлашки хут шăнкрав сас парĕ,
Эс тухăн аслă алăкран.
Текех юмах Йăванĕ мар эс —
Эс пулăн çамрăк арăслан!

Тăван хире эс тыра акăн,
Шăратăн хурçă хулара...
Эс Марс çине вĕççе курасшăн —
Çитес çĕре çит, ан хăра!

Космосалла вĕççе кайсассăн,
Тăван шкула савса ал сул.
Ăс-тăн керменĕ пулнă саншăн
Шап-шур карап пек шурă шкул.

Ялан-ялан тăван кил-çурт пек
Вăл курăнса ларин инçе!
Ешерĕ сад, вăл çулçă çупĕ
Çамрăксене шкула чĕнсе.

1960 ç.

## ТĔНЧЕ ХИТРЕ

Мĕнешкел тĕнче хитре!
Ирĕклĕх чикесĕр, вĕçсĕр...
Шĕвĕ сĕт пек тӳпере
Тăрăлсан ирхи тĕтре
Кайăксем юрлаччăр, вĕçчĕр!

Шур кăмпаллă вăрманта
Шурă хурăнсем шавлаччăр.
Выртмалла килсен утта,
Ырă вырăн пур унта —
Мамăк курăк, симĕс чатăр...

Мĕнешкел тĕнче хитре!
Ăшăнса çыврать, ав, ту-сăрт.
Сăпкари пек, уй-хире
Çил ачашшăн сиктерет,—
Кусăрах, хумсем, пĕр кусăр!

Хамăр ял çине пăхсан,
Савăнса тапать чĕреçĕм.
Ман тĕнчеçĕм чи малтан
Пуçланать тăван ялтан —
Çавăнпа тĕнче хитре-шим?

1958 ç.

## ПĔР ĔМĔРТЕ...

Пĕр ĕмĕрте ăçта кăна ан пурăн,
Ăçта кăна пусса йĕр ан хăвар —
Салтать-и çивĕтне сăртри шур хурăн,
Шыв кăтрине тытасшăн-и хăва —

Çук, манăçмасть, асран тухмасть çав
выран,
Пĕрре курни каймасть куç умĕнчен.
Ăна кайран аса илмешкĕн ырă
Тăçти-тăçти çĕн çĕрсене çитсен.

Тепре кăна савса курса тухасчĕ
Паллакă ялсене кĕрсе пĕрре.
Çынна кун-çул çитмест. Кунсем васкаççĕ
Эпир утса çитеес çук çĕре.

1958 ç.

# СИМĔСĔН-КĂВАКАН ГАЗ ÇУНСАН...

Шупашкар пики чей вĕретет,
Симĕсĕн-кăвакăн газ çунать.
Мĕнешкел ансат та эрехет,
Савăнăç тулмасть-и-ха чуна?

Шухăшлать-ши Шупашкар пики
Аякри тутар каччи çинчен?
Çулăмпа çунать газ кăмаки —
Тунсăхлать çав сар пике пĕччен.

Тутарстанăн чăн чипер хули
Çĕн хула пур — аякри Элмет.
Шурă Шупашкар пики валли
Элметрен асамлă газ килет.

Симĕсĕн-кăвакăн газ çунсан,
Вут хыпса илет хĕр чĕрине.
Чейпеле хăналĕ-ши хăçан
Сар пике Элметĕн каччине?

1959 ç.

## КĔРХИ ВĂРМАН

Çул урлă тайăлать те йăрăс хурăн,
Пин çын пекех шавлать вăрман. Кичем.
Сив çурçĕр çилĕсем йĕреççĕ хурлăн —
Кам вĕсене тустарнă йăвинчен?

Кăнтăралла вĕçен хур кайăк хыççăн
Вĕçеççĕ çулçăсем шăпăртатса.
Яш хурăнăм çунать çунат çуккишĕн —
Вăл хăй те чупĕччĕ тумне хывса.

1958 ç.

# КАÇХИ ШУХĂШ

Тӳпе пин çăлтăрпа çиçет.
Ăна çĕртен пăхса тăранçă
Виç хут хĕрес хывса илет
Тĕшмĕш чури, айван хăравçă...

Хӳреллĕ çăлтăр ярăнсан,
Пĕр чун вилсе çырлахрĕ тет-ши?
Пĕлет-ши вăл: сынсем паян
Çăлтăрсенчен вĕçсе иртесшĕн.

Çĕр тыткăнне çурса тухса,
Ют çăлтăрсем çине те çитĕç.
Курман тĕнчесене курса,
Этем тĕнче тытмашкăн тивĕç!

Пит тарăн-çке каçхи тӳпе,
Вăл çаврăнать хуллен, мăнаçлăн.
Тен, çăлтăрсем пĕр-пĕринпе
Выляççĕ пуль кулса калаçнăн?

Каçхи тӳпе симфонине
Сынсем илтейĕç те ăнланĕç.
Эпир çуралнă çĕр çине
Ют çăлтăр хăнисем те анĕç.

1959 ç.

## СУХАҪА

Ӗлӗк вӑрҫӑ ахӑрнӑ ҫӗрте
Шӑранаҫҫӗ юрӑсем хаваслӑн.
Тракторсем кӗрлеҫҫӗ уй-хирте,
Тулӑх пурнӑҫ никӗсне хываҫҫӗ.

Тухӑҫран тӳрех анаҫалла
Тӑсӑлса выртать ҫӗнелнӗ никӗс.
Касӑ хыҫҫӑн касӑ уҫӑлать
Хут ҫинчи сыру йӗрки пек тикӗс.

Касӑ айӗнчен килсе тухать
Бомбӑ катӑкӗ — тӑпраллӑ тимӗр.
Кам ылханмӗ ҫавӑ тутӑха?
Ӗмӗрех пурнасчӗ мул вӑрҫисӗр.

Ашшӗ вилчӗ ун ют ҫӗршывра,
Аслӑ пиччӗш вӑрҫӑра сухалчӗ,
Ҫавӑнпа мир сырӑвне сырать
Анасем ҫине паян сухаҫӑ.

1959 ҫ.

## КĔРКУННЕ

Ял çинче çĕнĕ çăкăр шăрши,
Кĕл çинче кĕрпеленчĕ улма.
Кӳршĕсен тарасаллă пусси
Йăмра витĕр пăхать урама.

Тĕтĕм пек карса илнĕ тĕтре
Ирсерен тĕтĕрет варсене.
Вăрманта сасă пачĕ витре —
Тутлă пултăр кăмпа хĕллене!

Кăткă евĕр ĕçлет ял çынни,
Вутă-шанкă туртать килнелле.
Мăрьерен ăшă тĕтĕм тухни
Такама та аван-çке хĕлле!

1959 ç.

## ЕНЧĔК

Шухăша кайсассăн хăш чухне
Сад айне ларатăп та пĕчченçĕ
Ухтаратăп кивĕ кĕсъене —
Аллăмра ман пĕчĕк пурçăн енчĕк.

Тĕпчĕм çеç табак ун тĕпĕнче —
Маншăн ылтăнран та-çке вăл хаклă.
Вăрçăра, пĕлмен ют çĕрсенче,
Хам çума çак енчĕке эп çакнă.

Кам алли тĕрленĕ-ши хитре?
Кам парни-ши эсĕ, пурçăн енчĕк?
Ырă самантра, çак сехетре,
Савăнса ман куçăм куççулленчĕ.

Кам пулсан та, чунĕ ылтăнран,
Ырă чунлă, тетĕп, пĕр сăмахсăр:
Ыр сынсем!
Эсир сынна тахçан
Хăвăр ырă тунине, тен, ас тумастăр...

Каялла чикетĕп енчĕке,
Ун тĕпне кăшт юлчĕ типнĕ çулçă.
Адресне вутра çухатрăм-çке —
Ăшăма çунтармăш çавă пулчĕ.

1959 ç.

## КĔНЕКЕ

Кĕнекӳне курасчĕ, терĕн,
Эп кĕнеке, теп, кун-çула.
Кунсем страницă пек пĕрерĕн
Тек уçăлаççĕ малалла.

Кун-çулăм — манăн кĕнекеçĕм:
Ял-йышăмсем, хура вăрман,
Çил пек вĕçен чĕвĕл чĕкеçĕм,
Чун савнисем, эсир те ман...

Ман кĕнекеçĕм — ман кун-çулăм,
Йăлăхмасан уçса вула.
Çул иртнĕçем вăл пулĕ хулăн,
Пуласлăхĕ ун — малалла.

1958 ç.

## ХĂНАРА

Эсир мана чĕнетĕр хăнана
Чыслас тесе-ши е савмасăрах?
Пичĕкĕрте — чашкăракан сăра, —
Пĕр тиркемесĕр сыпăттăм ăна,
Хăвармăттăм çемçе кăмăлăра.

Хăратăп çавă ӳсĕр пуласран —
Çухатмăп-ши калас сăмахăма?
Пултарăп-ши çĕн юрă пуçлама?
Кисренмĕ-ши эп ташласа ярсан.
Çĕн пӳрт урайĕ — сарă хыр хăма?

Тăванăмсем, мана çиленмĕр-и,
Маччаналла сăра пĕрĕхтерсен?
Хĕретмĕ-ши пите йӳç пĕрлĕхен?
Çĕн çуртăра, хĕрсе, хĕвел ури
Чӳречĕртен кĕринччĕ ирсерен!

Кил-çуртăр хăтлă пултăр, кил хуçи!
Пулсамăр хăвăр ырă та пуян!
Çĕр сум мар кирлĕ, çĕр юлташ пулсан,
Питĕрĕнсе ан тăтăр çăраççи,
Хапха умне хăна килсе тăрсан!

1958 ç.

## САЛАМ

Манман иккен... Салам çыраççĕ.
Салам хуть камшăн та кирлех.
Саламсăр çын — пĕччен пурнас çын.
Юлташсăр çын хăрать, чирлет.

Салам илсен, юрлать-çке чунăм,
Ташлас килет çав вăхăтра.
Савни çума ларса чуп тунăн
Пĕлместĕн-çке лара-тăра.

Юлташ саламĕ маншăн ылтăн,
Тутăхас çук сив сăмахпа.
Юлташсенчен юлмасăр,
хыттăн
Чуптартăрах ман урапа!

1958 ç.

# ТУТАРСТАНРА

Тутарстана курман çынна
Эп чĕнĕттĕм хампа пĕрле.
Тавраналла пăхса сăна,
Çул юппине тăрса итле:

Мĕн пур енче кĕрленĕ сас —
Хирте те шавлă, вăрманта...
Çук, сирпĕнмест унта турпас,
Çĕр юнĕ — нефть тапать унта.

Ним чухлĕ мухтанмасăрах
Сире калатăп чăннине.
Кунта хĕвел те урăхрах,
Курасчĕ уйăх тухнине!

Çулсем! Çулсем! Çатма-и, тен,
Кайса шыра вĕçне-хĕрне!
Нефть ырлăхне сиссе илсен,
Ăнланăн чăн телей мĕнне.

1959 ç.

## УДМУРТСЕМ ПАТĔНЧЕ

Илпек Микулайне

Кĕркуннеччĕ ун чух, сивĕрехчĕ,
Хыр вăрманĕ кĕтетчĕ хĕле.
Эпир, икĕ чăваш çул çӳревçĕ,
Çитсе ӳкрĕмĕр Иж еннелле.

Удмуртсем тараватт кĕтсе илчĕç,
Тăванла чăмăртарĕç алла.
Вĕсен килĕ — пире хамăр килччĕ,
Хăналантăмăр шеп, удмуртла.

Юррисем, ташшисем чаплă мар-и?
Ытарми италмас * çеçки пек!
Пĕр эрне пĕр кун пек иртсе кайрĕ,
Каяр мар-и татах та, Илпек?

---

* *Италмас* (удмуртла) — нар.

## КАРЕЛИРЕ

Хĕвелтухăç ытла ир хĕрелчĕ,
Çурçĕре çывхарать-çке экспресс.
Çумăрпа кĕтсе илчĕ Карели.
Карелпа калаçмашкăн кĕрер-и?
Вокзалра-и шырас тип кĕтес?

Кăнтăрла та çитмен-мĕн. Кун ир-ха.
Тăвансем патне çитĕпĕр час.
Аçтарах Сортавала е Вилга?
(Тăвансем пур çĕрте хамăр кил-ха!)
Хăвăртрах таксипе чуптарас.

Çул ик енĕ — хыр-чăрăш вăрманĕ.
Вăрман витĕр кĕретпĕр яла.
Хăйсен шывĕ кунта, шыв арманĕ,
Чуллă сăрчĕ те ешĕл çаранĕ,
Хăйсен шкулĕ, хăйсен муумала...*

Пĕр çуртра чăвашсем пурăнаççĕ.
Арçынни — манăн тус, офицер.
Хĕл ларсассăн, вăл чăрсăр сунарçă,

* *Муумала* — магазин тени пулать (карел чĕлхи).

Пулăран пушанмасть пир хутаçĕ —
Çăвĕпех ăшала та пĕçер!

Унăн мăшăрĕ çыншăн хавас çын,
Сăйламашкăн юмарт, тараватъ.
Тем çинчен те кунта эс калаçăн!
Сĕт пек шурă Карели çу касĕ.
Кас та мар вăл — чи ырă самант!

Çатмара тутлăран тутлă пулă.
Тĕл пулсассăн сăмах иксĕлми.
Калаçу шыв пек юхрĕ тем чухлĕ.
Тен, çаплах шăнкăрти саслă пулĕ
Кĕленче пек Карели сырми.

* *
*

Симĕс пурçăн тӳшек — вăрман айĕ,
Курăк мар вăл, мăкран çав тӳшек.
Çул çӳрен выртсанах ыйха кайĕ
Сăпкара ярăнса выртнă пек.

Тĕлĕкре хăй ачалăхне курĕ,
Чупса çӳрĕ тулта çаруран.
Вылямашкăн çемçе пулĕ курăк,
Ывăнсан тутлă пулĕ уйран...

Симĕс пурçăн — Карели тӳшекĕ,
Çук, вăрлаймĕ сана ют вăрман.
Пурçăну типсе кайĕ, тӳсеймĕ
Савнă Çурçĕр çилне ас тусан...

* *
*

Пĕчĕк Çируша

Чăваш ачи çуралчĕ тин кăна —
Пĕрмĕш кайăкĕ яш мăшăрсен.
Эп мĕн калам-ши пиллесе ăна?
Чăваш пек пултăр ырă та ĕçчен,

Карели çĕрĕнче ӳссессĕн те, ан тив,
Аслашшĕсен çĕрне ан тутăр ют.
Мăнаçлă çавă хамăрăн Çĕршыв,
Ăçта кайсан та пур хĕвел, кил-çурт...

Çуралнă çĕр темрен те хаклăрах:
Чукча сивве савать, узбек — ăшша...
Илемлĕ Çурçĕр кил пек пултăрах
Карелире çуралнă чăваша!

* *
*

Пуян Карелире пасар!
Вăл кăнтăрти пасар пекех:
Кунта сухан, ыхра, хăяр,
Пан улмине суйла, тултар,
Пулли те çăкĕ-çăкĕпех!

Кĕнекесен ретне çитсен,
Унта та шеп пырать суту.
Пăхать пĕр хуплашка çинчен
Çыруçă Антти Тимонен —
Шупашкарта паллашнă тус.

Хитре Карели сыннисем!
Хитрелĕхе сутмаççĕ çав.
Эп асăнмалăх мĕн илем?
Парне илме тепре килем.
Сыв пулăр, Çурçĕр каçĕсем!

Петрозаводск — Вилга.

1959 ç.

## МЕХЕЛ КИЛСЕН

Атăл шывĕ питĕ тарăн —
Эп хăратăп пит çума.
Эс, мехел килсен, пултарăн
Ун урлах сиксе каçма.

Тӳпере çут çăлтăр çиччĕ —
Пит çӳлте, пит аякра.
Мехелӳ кăна пулинччĕ —
Татăттăн эс çăлтăра.

Пултăрччĕ-ха ман мехелĕм,
Сикмĕттĕмччĕ Атăла —
Сан арку çине, хĕвелĕм,
Ларăттăм кула-кула.

Ман мехел пулас пулсассăн,
Çăлтăр памăттăм сана —
Çывăхран çывăх юлташшăн
Шелсĕр парăттăм чуна.

1958 ç.

## МĔНЕХ-ШИ ВĂЛ ТЕЛЕЙ ТЕНИ?

Телей, телей тесе калатăр,
Мĕнех-ши вăл телей тени?
Этем сасси ак ан янратăр,
Ан илтĕнтĕр çын калаçни —

Телейсĕр пулĕ чĕмсĕр халăх
Çут тĕнчере ĕмĕрлĕхе.
Чĕлхесĕр эп таçта сухалăп —
Сыв пултăрах тăван чĕлхе!

Ĕçпе хĕрмен çын пулĕ халсăр,
Телейĕ — ыйхă ун, тӳшек...
Этем тыр актăр та чул кастăр —
Телей ĕçрен шăтса ӳсет.

Ĕçчен чĕре шăратĕ юрă,
Ĕçчен этем юрри хитре.
Юрламасан телейсĕр çӳрĕ
Этем çак çутă тĕнчере.

...Çĕн уйăх ту çине хăпарчĕ,
Ялта яш-кĕрĕм шавлă, шух...

Телейлĕ эсĕ, çамрăк каччă,
Ши! шăхăрса ташланă чух.
Пĕрле кун-çул виçсе тухмашкăн
Çумра пулсассăн чун савни,
Ан хуйхăр ик ĕмĕр паманшăн —
Телей вăл — пĕр ĕмĕр тени.

1958 ç.

# ÇЫРУ

Килсе кур тесе миçе каларăм.
Яшлăхна йăлт мантăн-им ара?
Эсĕ тек хĕр мар, ачаллă арăм,
Упăшку та пур хăвна кура.

Çемйĕрпех килсемĕр. Айăпламĕç,
Сиввĕн пăхмĕç яшлăх тусĕсем.
Тĕл пулу тĕп пусĕ хам пулам-и,
Çул çине тухса кĕтсе илем?

Ту çине сире ертсе хăпарăп.
Эс манман пуль хамăрăн тăва?
Çавăнта хыпсаччĕ вут сасартăк
Хамăр хушăри юратăва...

Тахçанхи пекех çав ту ем-ешĕл,
Кĕмĕл тенкине тăкать валак.
Сирĕн юрату халь мар вăл, тесшĕн,
Пулнă, тесшĕн, ĕлĕк-авалах.

Çунатсем çинче вĕçет-çке ĕмĕр,
Вĕçсе çаврăн ху та ту тавра:
Тӳпене çĕклет эрешлĕ тимĕр,
Çĕр варне кĕрет вут чул-пăра.

Эс кунта чухне тавралăх шăпчĕ,
Трактор çеç тăрлатнă-тăр таçта,
Юррине шăратнă шукăль шăпчăк
Кашнинчех, вăййа тухсан, каçпа.

Ял вĕçне халь чул хула çĕкленчĕ,
Эс унта тĕл пулăн туссене.
Сĕтеле эп витĕп шур пĕркенчĕк
Эс кĕрсе тăрсассăн пӳрт варне.

Кил-йышпах килсе хăна пул,
Хирĕç тухмĕç пушă алăпа.
Тусăрсем сире кĕтмешкĕн хапăл,
Килĕр, шаккăр пирĕн алăка!

1959 ç.

## АН САХЛАН

Ҫул ҫинче эс ӑнсӑртран
Хӳхӗм сӑнлӑ ҫын курсан,
Ан сӑхлан.
Сӑнӗ чечекрен пулсан,
Чунӗ ан пултӑр чултан —
Чу, сыхлан.

1959 ҫ.

## ЙЕРЕТ ШУР ХУРĂН

Сар пике йĕмест. Йĕрет шур хурăн
Симĕсех пĕркенчĕкне пĕрсе.
Тăрă куççульпе йĕпеннĕ вырăн
Хĕвелпе типет-çке хĕрелсе.

Йĕрес çук шур хурăн çуркуннесĕр,
Тунсăхĕ килет ун çуркунне.
Кунĕпе пăхать вăл куç илмесĕр
Курăк пуснă кукăр çул çине.

Такама кĕтет те кассăн-кассăн
Çил вĕрсессĕн тайăлса кашлать.
Каччăпа хĕр килнине курсассăн
Сулхăн мĕлкине çĕре сарать.

Хурăна чĕрсе тахçан йĕр тунă —
Çырнă каччăпа пике ятне.
Унтанпа нумай хут йĕнĕ хурăн,
Кĕрсерен салатнă çулçине.

Хурăн шыв тумлать, йĕрет шур хурăн
Симĕсех пĕркенчĕкне пĕрсе.
Ĕлĕк каччăпа хĕр ларнă вырăн
Курăкпа хупланнă витĕнсе.

1958 ç.

## ÇУРХИ КАÇСЕМ

Яланах хама эп çамрăк тенĕ,
Шухăшсăр ăсатнă кунсене...
Çулсерен çакаççĕ кĕмĕл тенкĕ
Йăмрасем хаваслă çуркунне.

Çулсерен çурхи каççем илемлĕ,
Хапхаран кĕреймĕн ытарса.
Тĕнкĕлти тăмра сасне итлем-ши?
Пĕр тăсса ярам-ши купăса?

Хĕрсене тек илĕртмĕ ман купăс,
Кĕввĕме палламĕ çурхи каç...
Йăмрасем кăна, тен, çулçă çупĕç
Сан енче, юратнă турикас!

Пур унта ман савнă тунсăх вырăн,
Ман йĕрсем юлнах тăкăрлăка...
Çулсерен унта курма эп пырăп,
Таптама именĕп курăка.

Пур пĕрех хама эп çамрăк тейĕп,
Савăп çулсерен çурхи каçа...
Хам çумрах пулсассăн та телейĕм,
Ун пуçламăш юлнă-çке хыçа.

1958 ç.

## ЮР ÇУСАН...

Малтанхи юр шуратрĕ çĕре —
Ĕнтĕ çакă каллех хĕл çитни-тĕр.
Тӳпене карчĕ сулхăн тĕтре,
Юр çăвать, тăкăнать ала витĕр.

Çĕнĕ юрĕ çемçе те таса,
Вичкĕн çил ярăнса кăна чупĕ.
Кам çулла курайман юратса,
Йĕлтĕрпе йĕрлесе савни тупĕ.

Савнисем чупса тухĕç хире,
Юр çине юнашар йĕр хăварĕç.
Малалла вĕçтерсе йĕлтĕре
Чĕрисем хĕрсе тапĕç пĕр харăс.

1959 ç.

## ЭС ЧИПЕР ПУЛАСШĂН

Пит чипер пуласшăн эс çунатăн.
Авăнасшăн хир хăви пек эсĕ,
Пулăттăнччĕ эс çыран чĕкеçĕ —
Мĕншĕн çуралман-ши эс çунатлă?
Чипертен чиперлĕхшĕн çунатăн...

Кăлтăр-кăлтăр калаçса кулмашкăн
Пулăттăнччĕ эсĕ кăвакарчăн,
Чĕрине вут хыпĕччĕ сар каччăн —
Мĕншĕн кăвакарчăн эс пулман-ши
Кăлтăр-кăлтăр калаçса кулмашкăн?..

Тĕнчере чипер чечек нумай-мĕн,
Вĕсенчен те пулăттăнччĕ капăр.
Тĕкĕре пăхса, пике, ан макăр,
Маттуртан маттур пĕрех пулаймăн —
Тĕнчере чипер чечек нумай-мĕн...

Хитре мар тесе хăвна ан тарăх,
Телее сăна пăхса виçмеççĕ.
Хитрисем те пĕлĕтре вĕçмеççĕ.
Çыннăн хаклă чунĕ, ĕçĕ, тарĕ...
Хитре мар тесе хăвна, ан тарăх.

1959 ç.

## ТУЙ ИРТСЕН

Туй иртрĕ шавлă та хаваслă...
Ирех çĕн мăшăр тухнă урама.
Вĕсем çĕн алăк урлă каçнă
Çĕн ĕмĕтсем, çĕн шухăшсем тытма.

Çурхи чечек пекех тумланнă,
Ун пек чечек шăтмасть çав пахчана.
Пĕрле тăрсассăн, иккĕш пĕр тумлам пек,
Пĕр мăшăрах, пĕр калăп, пĕр чунах.

Тавраналла йăл-йăл кулса пăхаççĕ,
Хĕвел ури чупса килет уйран.
Вĕсем урам курса-ши савăнаççĕ,
Те хăйсене пăхать-ши пур урам?

1958 ç.

## ÇАМРĂК ЧУХ

Ман умра савниййĕн кив портречĕ:
Хурăнлăх... пин-пин чечек... ĕшне...
Çамрăк чух, чăнах та, вăл хитреччĕ,
Пурте урăхлаччĕ ун чухне.

Кайăксем те урăхла юрлатчĕç,
Чечексен шăрши те тутлăрах —
Савнипе пĕрле ларса çырла çи,
Чечексем татса шыва пăрах...

Урăхла пăхатчĕ кĕмĕл уйăх,
Çамрăксем вăййа тухсан çулла.
Сăмахсем те, тусăм, пулнă урăх,
Чĕресем те тапнă çамрăкла.

Иртнисем ыр тĕлĕке кĕреççĕ —
Вăранса лăпкап ачасене.
Çамрăк чух эпир çапла хитреччĕ,
Пурте урăхлаччĕ ун чухне.

1958 ç.

## АЯКРИ ХАЙ ÇУТИ

«Аякри пĕр хай çутин мĕн усси пур.
Алă шăннă вăхăтра пулмасан...»
(Халăх юрринчен).

Аякра-аякра хай çути курăнать,
Çăлтăр евĕр çунать, ăшши çук.
Пур пĕрех çунтарать чĕрери сурана
Савнă тус асăма килнĕ чух.

Çути пур та, савни унта мар,
Ăшăма пăштарать вăл çукки.
Каçсерен чĕрене çунтарать шĕл-кăвар —
Аякри йăлтăркка хай çути.

1959 ç.

## ИРТНӖ ЮРАТУН ҪУТИ ПУР...

Иртнӗ кун, сан ҫук ҫутту.
Иртнӗ юратун ҫути пур...
Юратуҫăм, юрату,
Сӳнтерме сана ма йывăр?..

Ватăлсан та, чӗрере
Ҫамрăк хăватпа ҫунса тăр!
Асăмри ҫула-йӗре
Тунсăх, сӗмлӗх витӗ сансăр.

## ХУТ КУПĂС

Йăмра мĕлки айне ял пытансан,
Каçхи тӳпе çути сӳнсен йăвашшăн,
Йĕс чĕлĕхлĕ хут купăс пурччĕ ман
Чĕре патне тытса туртса ямашкăн.

Турикасра туртсан, анаткаса
Сар кайăк пек вĕçетчĕ кĕмĕл кĕвĕ.
Савни килетчĕ уйăх пек кулса,
Пĕр аванса илетчĕ хăмăш пĕвĕ...

Яш ĕмĕре ăсатрăм туй туса —
Хунавлă пултăр хурăнташ тавраш!
Çамрăксене тыттартăм купăса —
Пĕлместĕп халĕ: купăсăм камра-ши?

Кама кĕтет-ши купăс каçсерен?
Кама шырать-ши макăрса, мăнтарăн?
Кĕвви нихçан çухалмĕ чĕререн,
Аса килсе ялан мана çунтарĕ.

1961 ç.

## ШĂЛТĂРТАТТĂР ЧАШĂК-ТИРĔК

Сарлака картишĕнче
Тарасаллă пусă пурччĕ.
Ватă çĕмĕрт айĕнче
Нăйлататчĕ вĕлле хурчĕ.

Кивĕ марччĕ пирĕн кил —
Çĕрĕшмен пĕр пĕрени те.
Аттесем хăварнă пил
Пурччĕ: сурăхĕ, ĕнийĕ...

Пахчара — хура мунча.
Ун тавра ӳсетчĕ çимĕç.
Виç-тăват ача-пăча
Кашнинех пулма вăл тивĕç.

Савăннă эпир ĕçре,
Мĕн кирли йăлт пулнă пирĕн.
Пур пĕрех ман çемьере
Шăлтăртатнă чашăк-тирĕк...

Шăп вун ик çул каярах
Пулнине калатăп мар-и!

Унтанпа ĕнтĕ пайтах
Шутлă вăхăт иртсе кайрĕ.

Халĕ пусă курăнмасть,
Мунчана сӳтсе салатрăм.
Чăр та чар ĕне сумасть
Пĕшкĕнсе ларса ман арăм.

Куçрăмăр çĕн чул çурта,
Çурчĕ пысăк — виçĕ хутлă.
Пĕлеймен çын, тупата,
Вăрманти пекех аташĕ.

Виççĕмĕш хутран çапла
Кантăкран килсе кур ху та:
Те çĕрле, те кăнтăрла —
Урамсем ялан çап-çутă.

Пĕчĕк ялăм халь хула.
Нефть хули, тăван хуламăр.
Ун пуянлăхне пула
Ырлăхра пурнатпăр хамăр.

Пурте пур ман кил-çуртра —
Газĕ, пăсĕ, шывĕ ирĕк...
Пур пĕрех сайра хутра
Сас паратъ çав чашăк-тирĕк!

Арăм кăмăлĕ тулман:
Хам суртрах-çке магазинĕ.

Холодильникне туян.
Кĕпе-йĕм çума — машинă...

Пурте кирлĕ-мĕн пире!
Çавăнпа калатăп çирĕп:
Ăраскаллă çемьере
Шăп ан лартăр чашăк-тирĕк!

1958 ç.

## АСАТТЕ КАЛАВĔ

Каçсеренех юмах ямашкăн
Мана хистеççĕ ачамсем.
Эп ватăлтăм. Выртса канасшăн.
Çурхи каçа выртса итлем.

Ача-пăчасăр, чун, ан савăн!
Ачасемпех тухам сада.
Каç тĕлĕрет темле асамлăн,
Мĕн чухлĕ вăрттăн сас унта!

Çара çерçи вĕçет сад урлă,
Хам пек ват çĕмĕрт çеçкере...
Часах ак пирĕн шăпчăк юрлĕ
Хăй савнă вăрттăн кĕтесре.

Ял вĕçĕнче юрлать хĕр-каччă,
Тĕнкĕлтетет таçта тăмра.
Мăнукăмсем: «Юмах калаччĕ!»—
Тесе сĕрлеççĕ ман тавра.

Ир вĕсене вăйăа тухмашкăн
Ват çыншăн вăйă кирлĕ мар.
Мăнукăмсем, эпир юлташлăн
Пĕрле ларар та калаçар.

Эсир çаплах юмах итлесшĕн.
Эп — юмах мар калам, чăнне.
Ваттисем çеç ăна пĕлеççĕ —
Эпир ача чух пулнине...

...Çара хирте кăнтăралла
Выртать-и ансăр çул пĕччен?
Хупланнă вăл курăкпала,
Сайра курнать иртен-çӳрен...

Çӳлте вĕçеççĕ кураксем,
Темскер çухатнă пек çулла.
Самар çулĕ тесе сынсем
Авал калатчĕç çак çула.

Вăл пĕр ял витĕр те иртмен,
Хăйса кĕмен тăкăрлăка,
Пур таврари çул-йĕрсенчен
Çапах вăл пулнă сарлака.

Хĕлле çап-çутă шыв пекех,
Çулла тусанлă та хура,
Пăркаланмасăр, тӳп-тӳрех
Пырса вăл кĕнĕ Самара.

Çав çулпала Майра-патша
Хăй иртнĕ, тет, пĕр çулхине.
Шур хурăнсем лартма хушса
Хăварнă, тет, çул ик енне.

Паян та ватă хурăнсем
Хуралласа лараç çула.
Вĕсем хăрса сайралнăçем
Ÿсет хунав кашла-кашла.

Авал чухне пуян купца
Чуптарнă сăрт çулĕпеле,
Вуншар лавпа танкăртатса
Васканă Атăл еннелле.

Купца таврашĕн çеç-и-ха
Самар çулне якатмалла?
Чĕтретнĕ, тет, тавралăха
Вăр-хурахсем çил-тăманла.

Пĕр хăрамасăр, шăнкравпа,
Ик-виç лаша кӳле-кӳле
Вĕсем çӳренĕ ушкăнпа
Тăр кăнтăрла та сĕм çĕрле...

Купцан лавне тытсан вара
Çаратнă, нимĕн хăварман.
Йĕр йĕрлесе кайса шыра —
Вĕсен кил-çурчĕ —
сĕм вăрман...

Вĕсен ыр тусĕ — тĕттĕм каç,
Ик питлĕ çĕçĕ — чăн юлташ...
Утна тăвар та ан калаç
Уй варринче, пуян тавраш!

Пӗр пӗчӗк ял пуянӗ Хрул
Хурахсемпе туслашнӑ та
Мул пухнӑ, тет, вӑл темӗн чул
Вӑрланине сута-сута.

Çил çунат пек лашисене
Усранӑ вӑл чул витере.
Ун хӗрӗ пулнӑ — пукане,
Мӗн пур тавра ялта пӗрре.

Вӑр-хурахсен асли ӑна
Юратнӑ — ватӑ утаман.
Юратӑвне вӑл яш чуна
Уçса памашкӑн шутламан.

Пӗррехинче вӑл Хрул килне
Килет ак тӑп-тӑр кӑнтӑрла.
Чи шанчӑклӑ тусӗсене
Лартса тухать вӑл хурала...

Сӗтел çине укçа тӑкать:
— Ĕçме-çиме кӑлар, хуçа!
Çунтар пур çӗтӗк-çатӑка,
Сана валли акӑ укçа!

Кӗрекӳне хӑна пуçтар,
Ĕçер, çиер паян пӗрле.
Ыран мана кӗтет Самар,
Унта туя ирттермелле!

Сĕрлет пӳртре хăна-вĕрле,
Сăра палкать пичĕкерен.
— Пуҫа ан усăр ҫĕрелле!
Юрлар хуҫан сăйĕпелен!

Тĕпĕртетсе ташша тухать
Чикан ачи — кăтра ача.
Авкаланса шыв пек юхать,
Шăвать, юхать урай, мачча...

Чикан ачи ташша ăста.
Эй, алă ҫупăр хăнасем!
Шăнкравлă картлă купăс та
Хăпартланать ташланăҫем.

Сĕтел ҫинчи кĕленчесем
Чăнкăртатаҫҫĕ ташă май.
Вĕлтĕртетеҫҫĕ урасем —
Пĕҫерекен пулать урай.

Тарланă ватă утаман
Сĕвĕрĕлме тухать тула.
Кӳме ăшне кĕрсе ларсан
Ши! шăхăрать вăр-хурахла.

Чикан ачи ташла-ташла
Тапса сикет чӳречерен.
— Мĕн пулчĕ ку, хуҫа, капла? —
Тесе ыйтаҫҫĕ пур енчен.

Утсем тапранчӗҫ выляса,
Тусан тусать, кӗрет куҫа.
Хуҫа, мӗн пулнине туйса,
Урай варне сапать укҫа...

Чупса тухать вӑл чӑлана,
Чупса тухать вӑл картишне.
Таҫти шӑнкрав сасси кӑна
Килсе кӗрет ун хӑлхине.

— Ах, сӗмсӗр вата утаман
Пӗтерчӗ ман айван пуҫа!—
Кайса ӳкет ак ураран
Тӑнне ҫухатнӑ Хрул хуҫа.

Ҫил-ҫунат пек урхамахсем
Тек кӗҫенмеҫҫӗ витере,
Тӑр кӑнтӑрла вӑр-хурахсем
Вӑрларӗҫ мӑкӑнь пек хӗре.

...Ҫара сӑртра кӑнтӑралла
Выртать пӗр ансӑр ҫул пӗччен.
Юмах-халап кала-кала
Халь асӑнаҫҫӗ ун ҫинчен.

Ҫӳлте шӑваҫҫӗ пӗлӗтсем,
Вӑрман юлать кашла-кашла.
Васкавлӑ ӗмӗр иртнӗҫем
Хуплать ҫул куракӗ ҫула.

1959 ҫ.

## ТĔЛ ПУЛУ

*Лисар пиччене асăнса.*

Çитрĕç шуррисем. Утсем — шур кăпăк,
Хĕç пек тăрса юлнă çӳхелсе.
Хыçалти лавра —
Пир витнĕ тупăк.
Лав çинех пăрахнă хĕресе.

Тахăш вилнĕ.
Çумĕнчех йĕнерĕ.
Васкаса пытарчĕç вилене.
Çук, никам та шеллесе йĕмерĕ,
Пуп кăна силлерĕ сухалне.

Халăха чиркӳ патне пуçтарчĕç,
Хăваларĕç, пухрĕç килĕрен.
Хĕвеле кĕрхи тӳпе пытарчĕ,
Мамăк вĕçрĕ тирексем çинчен.

— Арçынсем ăçта сухалнă сирĕн?!
Мĕншĕн пулăшмаççĕ патшана?! —
Шурă куçĕпе хаярран, сиввĕн
Офицерĕ пăхрĕ таврана.

— Лашăрсем ăçта?! Ăçта пытартăр?!
Тупăпăр, ухтарăпăр йăлтах! —

Халăх ним чĕнмест.
Пĕри çеç паттăр,
Офицер хуçа паян ялта.

Ухтараççĕ нимĕн хăрамасăр,
Нӳхрепре юлмасть ванман чӳлмек.
— Упăшкăр ăçта?!
— Килте-и аçăр?! —
Шуррисем çӳреççĕ урнă пек.

Асанне патне кĕреççĕ виççĕн —
Ик салтак та кӳршĕри пуян.
— Упăшки ак çакăн антихристчĕ, —
Тет пуянĕ шăппăн хыçалтан.

Алăри ачаччĕ, тет, аттеçĕм,
Вăл пĕлмен-ха каласса кулма.
Штык вĕçпе асаннене тĕртеççĕ,
Хăратаç пĕччен хĕрарăма.

— Упăшкун тĕлне каламасассăн,
Çакăнтах перетĕп! — тет пĕри.
Пĕчĕкçĕ ача ак каçăхассăн
Сăпкара йĕрет шăри-шари.

Çăварне минтерпеле хуплаççĕ
Пӳрт тулли йĕрсе çухăрмасса.
Теприсем таçтан тупса туххаççĕ
Ашшĕне, ал-урине çыхса.

Пытанма пĕлмен çав асаттеçĕм!
Ял куштанĕ сутнă чухăна.
Пуяна-çке пурнăçра пĕр техĕм —
Сутасси те суясси кăна.

Тыткăнри çынна сиксе таптаççĕ,
Тăратаççĕ чул хӳме çумне.
Тĕттĕмпе ма хупламасть-ши касĕ?
Мĕншĕн çĕр çăтмасть-ши çаксене?

Асаттен пит-куçĕ кăвакарнă,
Çулçă пек чĕтреççĕ тутисем:
— Революци тăшмана касармĕ!—
Тет вăл хыттăн.— Перĕр, ирсĕрсем!

Кĕрĕслетрĕ ик пăшал пĕр харăс.
Ӳкрĕ паттăр.
Татрĕç ĕмĕте.
Кĕпине кас-кас çилсем ласкарĕç —
Тăраймарĕ пирĕн асатте.

Юн ĕçен çĕлен пек ял куштанĕ
Шăвăнчĕ, хăрарĕ вилерен.
Çак усал ĕçе ял ĕмĕр манмĕ,
Тухмĕ вăл ял-йышăн асăнчен.

* * *

Вăтăр çул шăп иртрĕ.
Асаннеçĕм!
Халĕ те сăпка вăл сиктерет...

Асаттеҫӗм ӳкнӗ выҫӑн ешӗл —
Каш-кашлать унта лаштра тирек.

Ҫуркуннеччӗ.
Асатте картишӗ
Йывӑҫ сулхӑнне пытаннӑччӗ ҫапла.
Сӗр-сӗрлетчӗ ир-ирех хурт йышӗ,
Йӑмрасем ҫинче пухатчӗ вӑл пыла.

Ҫавӑн чух темле мучи мӑраннӑн
Кӗчӗ хапхаран туяланса.
Сӑнӗ-пичӗ унӑн шур тӑмран пек,
Шӑлӗсем те пӗтнӗ тӑкӑнса.

Асанне патне пырса пуҫ тайрӗ:
— Палламастна,— терӗ,— кӳршӳне?..
Асанне шарт сикрӗ:
— Эсӗ мар-и
Мӑшӑра вӗлертӗн... кӗркунне?..

Ват старикӗн аллисем чӗтреҫҫӗ,
Куҫӗсем пӑхаҫҫӗ таҫталла:
— Каҫару ыйтса кӑна вилесчӗ,
Ҫавӑнпа эп таврӑнтӑм яла...

Ҫӗпӗрте ҫӳрерӗм... Хамӑр ялшӑн
Пирӗн йӑх пулнах пуль ҫав усал...
Асанне каларӗ:
— Тек ан асӑн.
Куҫ ан куртӑр. Ман килтен тасал.

Ĕлĕкхи уçал мĕлке пуç тайрĕ,
Шăвăнчĕ вăл шăппăн хапхаран.
Кивĕ кил-çуртне вăл тупаймарĕ,
Ялĕнче тупмарĕ вăл тăван.

Ял урамĕ унсăр пушă мар-мĕн,
Пушă мар-мĕн ялăн кĕреки...
Аллуна тытсан та, саншăн,
таркăн,
Йӳçĕ пулĕ пирĕн ял черкки!

Вăтăр çул шăп иртрĕ.
Асаннеçĕм,
Мăнукна халь эсĕ сиктерен.
Иртнине тек асăнатăн эсĕ,
Картишне тухатăн ирсерен.

Сар хĕвел патне çӳле кармашнă,
Хӳтĕленĕ хӳмене тирек.
Вăл пĕлет хăй евĕр каласмашкăн,
Йăпатать сана ирпе ирех.

Ир пулать те, каç килет кăваккăн.
Лăпкăн-лăпкăн тĕлĕрех, тирек!
Асаттен сăнне эс ас тăватăн,
Эпĕ те манаймăп ĕмĕрех!

1959 ç.

## ÇЕМЬЕ

Атăлăн çыранĕ,
Аналталла сукмак.
Вăрман сывлатчĕ канлĕ,
Хумсемччĕ кăн-кăвак.

Чупатчĕ хум çил хыççăн,
Аванччĕ итлеме.
Кунта пурнатчĕç виççĕн —
Телейлĕ ыр çемье.

Вĕсен илемлĕ çурчĕ
Пăхатчĕ Атăла.
Хыçал енче шап-шурă
Курнатчĕ пĕр хула.

Чуна çĕклетчĕ Атăл,
Лăпкатчĕ чунлă пек.
Çынран тăмастчĕ татăк
Вăл çăвĕ-хĕлĕпех.

Чăма-чăма шыва кĕр,
Тыт пулă ирсерен.
Ачашласа сыватĕ
Çанталăк чир-чĕртен.

Вăрманĕсем илемлĕ,
Ем-ешĕлех çыран.
Пур такама çитмелĕх
Кăмпа, çырла, палан...

Çуралнă çĕр ма çывăх?
Вăл çĕр çинче — пĕрре.
Ах, уйрăлмашкăн йывăр
Унран çак тĕнчере.

Кунта пурнатчĕç виççĕн —
Уйрăласса кĕтмен.
Пĕри çеç вăрçă хыççăн
Сыв юлчĕ виççĕрен.

Пĕччен юлсан хĕрарăм,
Шăпланчĕ тăлăх çурт.
Çук, мăшăр таврăнмарĕ.
Ун ывăлĕ те çук.

Ылханлă вăрçă çирĕ
Упăшкине ирех.
Хастарлă командирччĕ,
Аттеччĕ çемьере.

Çухалчĕ савнă ывăл
Пурăнас чух пĕрле.
Пулсассăн та вăл сывă
Тупаяс çук киле.

Ăçта кăна çитмерĕ
Хĕрарăм çĕр тавра.
Куçра куççуль типмерĕ,
Сӳнмерĕ вут ăшра.

Çитет таçта, таçтах вăл,
Чĕтрет çӳхе тути:
— Вилчех-шим манăн ывăл?
Курмасть-шим кун çути?

Тăваттăраччĕ. Халĕ
Вăл пусрĕ саккăра.
Ăна такам та паллĕ,
Вăл ашшĕ пек кăтра.

Куçĕсемех кăвак ун —
Хирти кăвак чечек.
Утти-тĕрри ун — манăн,
Кулли çăл юххи пек.

Сахал-им кăвак куçлă
Ача çут тĕнчере?
Ун чух пин халăх куçнă,
Пин халăх — пин çĕре...

Хĕрарăм тупаймарĕ
Çухалнă ывăлне.
Лара-лара юрларĕ
Куççуллĕ юррине.

Шур акăш — лăпкă кайăк
Хăй мăшăрĕ вилсен,
Çӳлтен ӳкет чул майлă —
Пурнас килмест пĕччен.

Килти чипер чĕкеçĕн
Чĕпне кушак тытсан,
Вăл татăлса йĕмест-и?
Вăл ылханать чунран.

Йĕрет-йĕрет те хурлăн,
Вилет-çке çапăнса.
Черченкĕ чунĕ пур ун,
Чĕкеç пулсассăн та.

Анчах хĕрарăм чунĕ
Тӳсет çав йывăра.
Хĕлхем те çĕрĕн-кунĕн
Ан хыптăр çăвара,

Сивĕсенче çӳретĕр
Кĕпе вĕççĕн кăна —
Тӳсет çапах пурне те,
Çĕнет пур нушана.

Çемьешĕн, ачапчашăн
Шуралчĕ çӳçĕ ун.
Çухалчĕ пек ачашлăх,
Кăшт сивĕнчĕ пек юн.

Куççуль йӗр турӗ, касрӗ
Хӗрарăм сăн-питне.
Ёçпе кăна йăпатрӗ
Ёçчен этем хăйне.

Килте кăна салху çав —
Пушах тăват кӗтес.
Кампа-ха кăмăл усăн?
Кампа сăмах сӳтес?

Пӗр хӗрпеле пӗр ывăл
Вăл тупрӗ шырасан:
Волгоградран пӗри вăл,
Тепри — Ленинградран.

Вӗсем — атте-аннесӗр,
Пӗччен тăлăх-турат.
Ултта тин тухнă Петӗр,
Наçтук — тăваттăра.

Терт курнă виçӗ тăлăх
Пӗрлешрӗç пӗр çӗре.
Пăр кайрӗ Атăл тăрăх,
Çӗршыв каллех хитре!

Тинех ак вăрçă сӳнчӗ,
Мӗн пур тӗнче хавас.
Çынсен суранлă ӳчӗ
Çапах тӳрленмӗ час,

Вилниссене чěртеймěн,
Иртни юлать асра,
Юлать пěрле илемлěн
Юрланă юрăра.

Стена çинчен пăхаççě
Тахăçанхи сăнсем.
Пилоткăпа, ав, ашшě
Тăрать каласшăн тем.

Рам ăшěнчен хаваслăн
Кулать ялан тепри —
Ăçта кайса аташнă
Çак ывăл, улттăри?

Петěрпеле Наçтукě
Ыйтаççě мěскěнле:
— Паян килет-и, çук-и
Пиччемěрçěм киле?

Тухар-и шырамашкăн,
Анне, инçе çула?
Пичче ăçта аташнă,
Аннеçěмěр, кала.

Тулта пăч-тěттěм. Çилě
Йывăççене лăскать.
— Хăçан пиччемěр килě?
Ăçта тěнче касать?

Тулта ҫăвать вĕт ҫумăр,
Сив ҫил вĕрет хут-хут:
— Сывах,— тет,— пиччĕр. Тупăр.
Утланăр юлан ут.

Пулайăрах чăн паттăр
Инҫе ҫула тухсан!
Утса пушмак якалтăр,
Йĕп юлтăр туяран —

Эсир ҫапах ан чакăр,
Утсамăр малалла.
Тăванăра тупмасăр
Ан килĕр каялла.

Тулта пăч-тĕттĕм. Ҫилĕ
Йывăҫсене лăскать.
— Хăҫан, пиччемĕр килĕ?
Ăҫта тĕнче касать?

Тухар, аннеҫĕм, халĕ
Эпир инҫе ҫула.
Пичче мĕнле ҫухалчĕ,
Аннеҫĕмĕр, кала!

* * *

— Ах, йывăртан та йывăр
Ăна халь асăнма.
Манпа кайсаччĕ ывăл
Асламăшне курма,

Чĕнсеччĕ-çке асламăш
Хăна пулма пире.
Молдави. Хĕвеланăç.
Садсемччĕ çеçкере.

Анчах хуралчĕ пĕлĕт,
Капланчĕ анăçра.
Хупларĕ вăрçă кĕлĕ
Пурне те таврара.

Унта юлма хăрушă,
Ни кунталла килме...
Вакунсенче çук хушăк
Лармашкăн, хĕсĕнме.

Станцăсенче лăк халăх,
Пуçтарăннă таçтан.
Ма кирлĕ пӳрт е алăк
Тарма варсем пулсан?

Самолетсем йĕреççĕ,
Çĕре çын тăкăнать.
Çĕр чĕтренет чĕрес пек,—
Вут хыпрĕ катана...

Ун чух çухатрăм сирĕн
Пĕртен пĕр пиччĕре.
Пĕтерчĕ вăрçă, çирĕ
Ăна, пĕчĕкскере...

* *
*

Ан хуйхăрсам, аннемĕр,
Пичче сывах пуль, тен.
Эпир ăна кĕтетпĕр,
Шанатпăр: вăл вилмен.

Ăçтан кăна ыйтсан та,
Вăл пур пĕр тупăнман.
Тӳсмешкĕн хĕн пулсан та,
Тӳрленетех суран.

Хуллен-хуллен юсаннă
Хуйхи-суйхи аппан.
Ĕçрен кая юлсассăн,
Килте ăна манман:

Кĕтмешкĕн хирĕç тухнă
Петĕрпеле Наçтук,
Пӳртне тасатнă, çунă,
Никам та тиркес çук.

Пĕр сиктермесĕр Петĕр
Вулать журнал-хаçат,
Ун амăшĕ итлетĕр
Ăна кашни каçах.

Пĕр хаçатра ӳкернĕ
Темле ача сăнне.
Вăл тахçанах çĕтернĕ
Хăй ашшĕ-амăшне.

— Анне, пиччө çав мар-и?—
Ыйтаççĕ ачасем.—
Ав, çӳçĕ те ун сарă,
Кăвар пек куçĕсем.

Ача халь вуннăра-мĕн,
Ун ячĕ те Якур.
Курсан ху уйăраймăн,
Аннемĕр, кайса кур.

Вăл урăх хушаматлă
Ан тив, пулин тата!
Тен, вăрçă урăхлатнă
Хушаматпа ята.

Пĕлмест, тет, ашшĕ-амăш
Камне те ăçтине.
Аса илет вăш та вăш
Çилпе хум сикнине...

Хăйсен килне пăртакçă
Ас тукалать ачи.
Шыв хĕрринчи вартаччĕ
Вĕсен пахчи, мунчи...

Вăл ас туни — тĕтреллĕ,
Тĕлĕкри пек шупка.
Шухăшсене пĕрерĕн
Суйлать пуха-пуха.

Темле кăна манман вăл
Юратнă юррине:
«Сиктер, сиктер, шур Атăл,
Хĕвелĕн ачине...»

Ăна юрлатчĕ амăш,
Якур ăна манман.
Çав юрă шурă акăш
Пулса вĕçет ялан.

— Анне, пичче çав мар-и? —
Ыйтаççĕ ачисем.
Çук, амăшĕ шанмарĕ:
Суймаççĕ-ши куçсем?

Хăлха чăнах илтет-ши
Çав тахçанхи юрра?..
Пăрахутсем иртеççĕ,
Шур парăссем шывра...

Тен, кимĕре юрлаççĕ
Шур Атăл юррине?..
— Çук, хаçатра çыраççĕ.—
Лăплан, лăплан, анне.

— Чăн, пиччĕрех пуль çавă.
Тумланăр, ачамсем.
Ку — пиччĕрĕн йыхравĕ —
Сисет, туять чĕрем.

Лараççĕ те каяççĕ
Шывпа анаталла.
Саратов унăн ячĕ —
Илемлĕ шур хула.

Унта пур ача çурчĕ,
Унта Якур пурнать.
Палларĕ амăш, курчĕ
Çухатнă ачана.

Анчах та палăртмарĕ
Хумханнине-мĕнне,
Хуллен кăна юрларĕ
Шур Атăл юррине.

Ача ак пăхрĕ чалăш,
Пăрахрĕ выляма.
Ас турĕ пек ачалăх
Тасти çиле, хума...

Вăл ултă çул илтменччĕ
Çак аякри юрра.
Тем пулнипе чĕтренчĕ
Ача çак самантра.

— Анне! — тесе вăл хыттăн
Пĕр кăшкăрать.— Анне!
Кĕрсе ӳкет тем тытнăн
Вăл амăш ытамне.

Çынсем куçне шăлаççĕ,
Ним тăваймасть ачи.
Вăл каснă-лартнă ашшĕ —
Мĕнле пулайнă-ши?

Çуталчĕ сӳннĕ шанчăк
Çут çăлтăр пек маттур.
Тупăнасса шанманччĕ,
Хăй тупăнчĕ Якур!

* *
*

Хум явăнать шап-шурă —
Шыв çулĕ-çке çапла!
Ялсем, сăртсем — мĕн пурĕ
Шăваççĕ хыçала.

Прахут салонĕ çутă,
Тĕнче ярт уçă пек.
Ишет, ишет прахучĕ
Мăн Атăл çийĕпе.

Чуна çĕклет роялĕ —
Якур ăста калать.
Çыран, йăмраллă ялĕ
Ăна илтсе юлать.

Илемлĕ Атăл хумĕ
Чупать çак кĕвĕре.
Якур тек тăлăх пулмĕ
Телейлĕ çемьере.

Савӑнӑҫпа ҫуталчӗ
Сӑн-пичӗ амӑшин.
Аманнӑ ун ҫуначӗ
Тӳрленчӗ пек халь тин.

Наҫтук, Якур та Петӗр —
Телейлӗ пӗр ҫемье.
Вылятӑр хум, чӳхентӗр,
Лӑпкатӑр-и кимме!

Кур — Атӑлӑн ҫыранӗ,
Анаталла сукмак.
Таҫти пӗр хыр вӑрманӗ
Хум тӗслӗ кӑн-кӑвак.

Хумсем юрлаҫ хӑватлӑн
Мӑн Атӑл ҫеммине.
Кунта пурнаҫ тӑваттӑн —
Телейлӗ ыр ҫемье!

1960 ҫ.

## КĔТМЕН ХАНА

Шурăмпусчен вăранчĕ Улюна —
Чӳречерен кăвак çути кĕрсен.
Ыр хыпарпа пĕр хускатсан чуна,
Куçа хупса выртмашкăн хĕн иккен.

Ун ывăлĕ паян таврăнмалла,
Ун кун çутиййĕ, шанчăкĕ — Кируç.
Ыр хыпара киле, тăван яла
Çитерчĕ-çке кăвак конверт-çыру.

Виç çул курман. Вĕренчĕ аякра.
Çын пулчĕ, тухрĕ аслă çул çине.
Хĕвел ялан çӳрет-и çĕр тавра —
Ялан хăй ывăлнех кĕтет анне.

Шухăшласа мĕн чул çĕр сывăрман,
Чĕрçи çине тумлатнă куççуле...
Тулта улать асар-писер тăман —
Шăнмасть-ши вăл кĕске кĕрĕкпеле?

Кăмакара икерчĕ писнĕ чух
Каллех вăл асне илнĕ Кируçах:
Темле пурнать ĕнтĕ ачу-пăчу —
Те тутă-ха, те вăл çӳрет выçах?..

Çитет ăша-чикке те пăштарма!
Тăван яла килет паян хăна!
Кустар, кустар çул тăрăх, кустăрма,
Ача чухнех выляна тусана!

Пĕчĕккĕллех тăн-пуçлăччĕ Кируç,
Вăл сăпкара чухне те макăрман...
Кăшт йĕрсенех вара: «Куç, тух! Тух, куç!»—
Сыхланă Кируçа куçăхасран.

— Çич хутăр турăм ывăл çуратсан.
Макра пулмарĕ, ӳсрĕ сăпкара,—
Кăшт мухтанас йăли пур Улюнан
Кӳршисемпе калаçнă хушăра.

Талппан пек ӳсрĕ пĕчĕкçĕ этем —
Пĕлмен, курман çи-пуç çĕтĕккине.
Вăл ашшĕнчен туяннă йăлтăркка куçсем,
Сĕтпе пĕрле вăрланă амăш куллине.

Курса тăранайман çав ывăла,
Пăхса ытарайман çав Кируçа:
Пит çамрăкла каймарĕ-ши шкула?..
Пит йывăр килмĕ-ши айван пуçа?..

Пĕчĕккĕллех ун аллинче тăмра,
Вара — хут купăс — икĕ рет тӳме.
Выля, Кируç, ташлаччăр урамра!
Выля, Кируç, ял илемне кӳме!

Чипер савнисене алхастарса
Янранă туртма купăс кашни каç.
Аркисене çилпе арпаштарса
Хĕрсе кайса ташланă хĕр-упраç.

Кируç çинчен шутланă чух каçпа
Хĕр ĕмĕрĕ асне килет инкен.
Йĕс шăнкăрав сасси пек, тунсăхпа
Вăл илтĕнет пек халĕ инçетрен.

Çуралнă ял. Пӳрт умĕнчи йăмра.
Хĕвел ансан хĕр-тантăш пир çапни...
Ик çивĕте салатса тура-тура
Килес шăпа çинчен çĕрĕ яни...

Ак аслă çимĕк тенĕ чух ыран
Евчĕсем калаçрĕç сын илтми:
— Пулас ута пĕлеççĕ тихаран,
Улмуççинчен инçе ӳкмест улми...

Йăлишĕн çеç систерчĕç эрнерен
Хĕр ĕмĕрĕ кĕски çинчен ăна.
Ют ял каччи вăрласшăн сар хĕре,
Çич ют енчен килеççĕ хăтана.

Вăл юрату мĕнне те тавçăрман.
Яш ĕмĕр иртрĕ. Кăвакарчĕ çӳç.
Мĕн пур юратăвĕ те Улюнан
Çут тĕнчере пĕр ывăлĕ — Кируç.

Упăшкине вăратрĕ Улюна:
— Тăрсам, старик, хĕрелчĕ шурăмпуç.
Тытса кӳлех çунатлă лашуна —
Çуран ан тухтăр станцăран Кируç.

Тӳп-тӳрĕрен кай кивĕ çулпала,
Пĕлĕш-тавраш патне ан кĕр эс тек.—
Карчăккинчен старик иртмест мала.
Вăл хирĕçмест. Вăл чĕмсĕр пулă пек.

Те арăмне хытах юратнăран,
Те арăмин чун сиввине кура,
Хĕрарăмăн сăмахĕнчен тухман —
Пуç çапнă вăл, пуç çапнă пек турра.

Старик сăмахсăрах тумланчĕ ак,
Хыпалансах ун тухмалла çула.
Йăмра çинче чакăлтатать чакак —
Çын килессе систет ула-чăла!

Ирпе ирех мăкăрланать мунча,
Кил картинчех çĕн милĕкĕн шăрши...
Чим, Кируçа — ялти чипер качча —
Хăй килĕнче кăна кĕтеççĕ-ши?

Тен, кӳршĕ хĕрĕ тĕрĕ тĕрлесе
Каç-каç куçне хупман пуль уншăнах?
Юратуран вăйли çук—тĕрĕсех!
Пĕлетĕп: ун ăсапĕ те пурах.

— Авлантармашкăн ир-ха ывăла,
Вăй выляса çӳретĕр-ха пăртак.
Яш ĕмĕре васкав ан хăвала —
Хăналăх çеç пурнатпăр мар-и çак?—

Ĕçлет-çке Улюна пупле-пупле,
Кӳршисене те систерсе хурать.
Самантсерен сăнать сар хĕвеле,
Урамалла туха-туха пăхать.

Хĕрарăмсем шавлаççĕ шыв ăсса:
— Кашта пек пулĕ ывăлу, кума!
Халь çамрăксем ӳсеççĕ кашласа,
Е, калăн, çумăр хыççăнхи кăмпа!..

Ял варринче кĕç курăнчĕ «такси»,
Йăр ярăнса çывхарчĕ кунталла.
Ун хыçĕнче тусан куси-кусми
Упаленсе килет шур упалла.

Ак тамаша, вăл Улюна умнех
Тăп чарăнать пĕр сассăр-мĕнсĕрех.
Паллать инке юратнă ывăлне —
Ури çинче тăма юлмасть тĕрек.

Ват амăшне Кирусĕ ыталать,
Пырса уçать машинă алăкне:
— Ак ку,— тет,— манăн мăшăрăм пулать.
Кинӳпеле паллаш эппин, анне.

Мĕн пулчĕ амăшне çав самантрах?
Пĕр шуралать, тепре вăл хĕрелет.
Çак намăса тӳсменнипе часрах
Тухса тарас килет ун хирелле.

Упăшкине чарса калас килет:
Ан кайтăр вăл, ан кӳлтĕр лашине...
Анчах тӳсессине-мĕн тӳсмелле —
Виç çул курман мăнтарăн ывăлне.

Пӳрте чĕнет кĕтмен хăнасене.
Çынсем килеççĕ, калăн, туй курма.
Хăнасене курса çунать анне:
Ни савăнма пĕлмест, ни макăрма...

Ачаш ӳстернĕ савнă ачаран
Илтес килмест-им унăн ăш сăмах?
...Лаша пулас ут паллă тихаран,
Улмуççипе улми юнашарах...

1958 ç.

## ÇУМККА МУЧИ САМАХĔ

Итлĕр вată Çумккана,
Чи ватти văл ку касра:
Шăвăнса хуллен кăна
Çитрĕ çитмĕл тăххăра.

— Пирĕншĕн саккун пулман,—
Тет паян Çумкка мучи.—
Камччĕ эп? Ыйткалакан,
Суккăр кĕлĕмĕç ачи.

Ыйтăр вата çынсенчен,
Ял пĕлет — суймасть Çумкка —
Ман нуша палли пĕтмен:
Халь те шăтăк-ха çамка.

Ят кăларчĕç ял çине,
Пултăм эп «Шăтăк Çумкка».
Ĕлĕкхи саккун чухне
Мăшкăллатчĕçĕ çука.

Чухăн çын та чунлă-çке,
Савăнать хăйне кура:
Тахçанта пĕрре ĕçке
Кайрăм эп пĕр уявра.

Шăтăк-шатăкчĕ сĕтел,
Тĕнĕ пекчĕ чӳрече.
Вăтанса вылять хĕвел
Хытнă çĕр урайĕнче.

Сăйĕ чухăнăн начар,
Мĕн пурри те сив сăра,
Кăвакарнă сăмавар,
Пултăранĕ яшкара...

Шăкăл-шакăл калаçса
Ларнă чух эпир курман —
Лашине ак çавăтса
Алăкран кĕрет куштан.

Хăнасем патнех пырса
Çитерет вăл лашине.
Ых, пĕлесчĕ намăса!
Мăшкăллать çын апатне...

Хирĕç тăтăм куштана —
Килчĕç-кĕчĕç сиччĕн тан.
Эпĕ тартăм пахчана —
Лашипе вăл ман хыçран!

Çитрĕ те çав кӳсекпе
Вăркăнтарчĕ ман çине.
Ас-тăна сухатнипе
Ас тумастăп ыттине...

Шăтăк юлчĕ ман çамка —
Елĕкхи саккун палли.
Пур пĕр сывă-ха Çумкка,
Мăнуксем те сак тулли!

Çĕн саккун ырлăхĕпе
Ыр куратăп эп паян.
Çук сыпран тухса шепе
Пултăм халăхпа пĕр тан.

Пилĕк ывăл ӳстерсе
Эп пиллерĕм Çĕршыва.
Пур те тухрĕç вĕренсе,
Тивĕç пулчĕç мухтава.

Счетовод, учитель, врач,
Таврăнчĕ майор Çартан.
Хаçатра çырса тăрать
Хулара пĕр ывăл ман.

Конституци — тĕп саккун
Пачĕ кĕтнĕ ырлăха.
Çамрăкланчĕ ватă чун,
Çĕр çула çитесчĕ-ха!

1959 ç.

## ТУПМАЛЛИ


Çуралнă çĕршыв . . . . . . . . . . . 5
Парти курать . . . . . . . . . . . 8
Пирĕн çуркунне . . . . . . . . . . . 10
Эс аташмăн . . . . . . . . . . . 13
Андриян Николаева . . . . . . . . . . . 15
Тавтапуç . . . . . . . . . . . 16
Тĕнче курас тесен . . . . . . . . . . . 17
Ĕмĕртен çапла пырать . . . . . . . . . . . 20
Агитатор патĕнче . . . . . . . . . . . 22
Асатте-суйлавçă . . . . . . . . . . . 24
Пирĕн ял . . . . . . . . . . . 26
Тăван шкул . . . . . . . . . . . 28
Тĕнче хитре . . . . . . . . . . . 30
Пĕр ĕмĕрте . . . . . . . . . . . 31
Симĕсĕн-кăвакăн газ çунсан . . . . . . . . . . . 32
Кĕрхи вăрман . . . . . . . . . . . 33
Каçхи шухăш . . . . . . . . . . . 34
Сухаçă . . . . . . . . . . . 35
Кĕркунне . . . . . . . . . . . 36
Енчĕк . . . . . . . . . . . 37
Кĕнеке . . . . . . . . . . . 38
Хăнара . . . . . . . . . . . 39
Салам . . . . . . . . . . . 40
Тутарстанра . . . . . . . . . . . 41
Удмуртсем патĕнче . . . . . . . . . . . 42
Карелире . . . . . . . . . . . 43
Пĕчĕк Çируша . . . . . . . . . . . 45
Мехел килсен . . . . . . . . . . . 47
Мĕнех-ши вăл телей тени? . . . . . . . . . . . 48

Çыру . . . . . . . . . . . . . . . 50
Ан сăхлан . . . . . . . . . . . . . 52
Йĕрет шурă хурăн . . . . . . . . . . 53
Çурхи kaçсем . . . . . . . . . . . . 54
Юр çусан . . . . . . . . . . . . . 55
Эс чипер пуласшăн . . . . . . . . . . 56
Туй иртсен . . . . . . . . . . . . 57
Çамрăк чух . . . . . . . . . . . . 58
Аякри хăй çути . . . . . . . . . . . 59
Иртнĕ юратун çути пур . . . . . . . . 60
Хут купăс . . . . . . . . . . . . 61
Шăлтăртаттăр чашăк-тирĕк . . . . . . . 62
Асатте калавĕ . . . . . . . . . . . 65
Тĕл пулу . . . . . . . . . . . . . 71
Çемье . . . . . . . . . . . . . . 76
Кĕтмен хăна . . . . . . . . . . . . 90
Çумкка мучи сăмахĕ . . . . . . . . . 96

АЛЕКСЕЙ АНДРИАНОВИЧ АФАНАСЬЕВ

**ДРУЖБА И ЛЮБОВЬ**

**Стихотворения**

На чувашском языке

Редактор **Г. Орлов**
Художествен. редактор **В. Солодовников**
Технич. редактор **В. Павлова**
Корректор **Н. Иванов**

НТ 03331. Сдано в набор 22/V-1963 г. Подп. к печати 20/VII-1963 г.
Формат 60×92 1/32. Объем 3,125 печ. л. Учетн.-изд. л. 2,70.
Тираж 4 000 экз. Изд. № 94. Заказ № 1884. Цена 24 коп.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР
Город Чебоксары, ул. Володарского, 5.

Цена 24 коп.